[illegible] çул тухать. Хаке 15 пус.

1942 МАРТ 21 ШАМАТКУН 67 (6092) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Çĕршыв пурнăçĕпе тата пирĕн халăхăн историйĕпе çыхăнса тăракан паллă праздниксемпе уявсене производствăра пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илесси пирĕн ĕççыннисен йăлине кĕнĕ, ĕçри çирĕп йĕрке пулса тăнă. Çавăнпа та кашни пысăк уяв умĕнех пирĕн çĕршывра политикăллă тата производствăллă çĕкленӳ пуçланса ӳссе пырать, ĕççыннисем çав уяв тĕлне пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ, пĕр-пĕринпе социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ, юлса пыракансене мала туxма пулăшаççĕ. Çак ăмăрту вара пирĕн çĕршыв хуçалăхне пысăк утăмсем тума, хăвăрт малалла кайма пулăшать.

Кăçалхи февраль уйăхĕнче эпир хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна уявласа ирттертĕмĕр. Çак уяв у[illegible] пĕтĕм çĕршыв социализмлă ăмăртăва хутшăнса, чаплă праздникс пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешрĕ. Рабочисемпе колхозниксем, интеллигенци хăйсен производствинче пысăк çĕкленӳпе ĕçлеме тытăнчĕç. Тăшмана çĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшу парасси вăйланса пычĕ. Çапла вара Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне пирĕн çĕршыв фронтра та, тылра та пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Майăн 1-мĕшĕ пирĕн чи пысăк праздниксенчен пĕри пулса тăрать. Вăл уява пирĕн ĕççыннисем яланах пысăк хавасланхпа кĕтсе илсе уявлаççĕ. Вăл праздник умĕн кашни çулах пирĕн çĕршывра социализмлă ăмăрту анлăн сарăлсе пырать. Колхозсенчи, предприятисенчи стахановецсем, хăйсен пĕтĕм вăйне хурса ĕçлесе, праздник ячĕпе çĕнĕ çитĕнӳсем тума тăрăшаççĕ.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яни кăçал, отечественнăй аслă вăрçă условийĕсенче, лушшех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ăмăртăва сарса ярса, пирĕн çĕршывпа фронт валли ытларах та ытларах хĕçпăшалсем, боеприпассем туса кăларассишĕн, Хĕрлĕ Çар валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе парассишĕн кĕрешмелле. Тылпа фронт çыхăнăвне татах та ытларах çирĕплетсе пымалла.

Паян эпир Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисем май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнни çинчен пĕлтерекен çырăва пичетлесе кăларатпăр. Пирĕн корреспондент çырса пĕлтернĕ тăрăх, вагонсем юсакан заводра май уявĕ умĕнхи ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Кубский юлташ начальник пулса ертсе пыракан цехри рабочисемпе работницăсем апрель уйăхĕнчи программăна 125 процент тултарма, двухсотниксемпе трехсотниксен йышне икĕ хут ӳстерме, горючисене тата материалсене перекетлеме обязательствăсем илнĕ. Формовщик Подвиженко юлташ тата цехри паллă стахановецсем Тороценко, Зобченко, Злотников юлташсем ĕç нормине 250—300 процент тултарса ĕçлеме пулнă. Вĕсем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçлама тытăннă. Мартăн 17-мĕшĕнче формовщик Подвиженко сменăра 3 норма тултарнă, стахановка Могусенко 2,5 норма тултарса ĕçленĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура, яланхи пекех, коммунистсемпе комсомолецсем малта пыраççĕ. Вагонсем юсакан цехри коммунистсем Букаткинпа Писменный юлташсем, ремонтно-механически цехри слесарь-комсомолец Орлов, инструментальнăй цехри строгальщик-комсомолец Емельянов тата ытти нумай юлташсем куллен икшер-виçшер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Вагонсем юсакан заводри рабочисен пуçарăвне пур майсемпе те ырламалла тата ăна анлăн сарса памалла. Республикăри пур предприятисенче те, пур колхозсенче те май уявĕ умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса ярас пулать. Пролетариллĕ аслă праздника производствăра пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн пыракан çак ăмăртăва кашни рабочие, кашни колхознике, кашни служащие явăçтармалла.

Пирĕн предприятисем халĕ чылайĕшĕ васкавлă заказсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çав заказсене вăхăтра тата ытлашшипех пурнăçа кĕртесси, ĕç тухăçлăхне тăтăшах ӳстерсе пырасси, продукци пахалăхне пĕрмаях лайăхлатса пырасси, чĕртавара перекетлессишĕн кĕрешесси, оборудованисемпе туллин усă курасси, çапла вара фронта пулăшас ĕçе май килнĕ таранах вăйлатасси, — çаксем ĕнтĕ предприятисенчи май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвăн тĕп задачисем пулса тăмалла. Вăл задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе кашни рабочин, кашни инженерно-технически работникăн хăйĕн çине конкретнăй обязательствăсем илмелле.

Колхозсемпе совхозсенче май уявĕ умĕнхи ăмăртăвăн тĕп задачи — кăçалхи большевикла çуракине пур енĕпе те хатĕрленсе çитесси пулмалла. Уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, колхозниксемпе колхозницăсен вăрлăхсене пĕтĕмпех хатĕрлесе çитерессишĕн, машинăсемпе транспорт инвентарĕсене юсаса хурассишĕн, ĕç вăйĕсене çураки валли хатĕрлесе çитерессишĕн кĕрешмелле. Пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçри ăнăçлăха çураки татса парать. Çавна асра тытса, çурхи ака ĕçĕсене кĕске срoксенче тата пысăк пахалăхпа туса ирттерме пирĕн хатĕр тăрас пулать.

Пирĕн çĕршыв сине вăрă-хурахла тапăннă тăшмана Хĕрлĕ Çар вăйлăрах та вăйлăрах пырса çапать. Тăшман пысăк сухатусем тӳсса хĕвеланăçнелле чакса пырать. Анчах ăна пĕтерсе тăкман-ха. Малашне татах та вăйлăрах çапăçусем пулса иртĕç. Çавăнпа та тăшмана çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе пирĕн пур майсемпе те вăйлатас пулать. Тылри производствăллă çĕкленĕве пĕрмаях ӳстерсе пырас пулать.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса, мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе вăйлатар!

Май уявне хатĕрленеççĕ

КАНАШ, мартăн 18-мĕш. (Хамăр корр., телефонпа). Вагонсем юсакан заводра май уявĕ умĕнхи ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Кубский юлташ начальник пулса тăракан цехри рабочисемпе работницăсем апрель уйăхĕнчи программăна 125 процент тултарма, двухсотниксемпе трехсотниксен йышне икĕ хут ӳстерме, горючисене тата материалсене перекетлеме обязательствăсем илнĕ. [illegible]

Формовщик Подвиженко тата цехри паллă стахановецсем Тороценко, Зобченко тата Злотников юлташсем ĕç нормине 250—300 процент тултарса ĕçлеме пулнă. Вĕсем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçлама тытăннă. Мартăн 17-мĕшĕнче Подвиженко—3 норма, стахановка Могусенко—2,5 норма тултарнă.

Çак кунсенче механически цехра ĕçлекенсем те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Комсомолец-токарь Юраков, разметчик Родионов юлташсем нормăна 350—375 процент, сверловщица Баданова—537 процент, болторезчица Бочкарева 437 процент тултараççĕ. Ватă тимĕрçĕ Седин, Тронин молотобоецпа пĕрле, васкавлă заказсене пурнăçлама [illegible].

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура, яланхи пекех, коммунистсемпе комсомолецсем малта пыраççĕ. [illegible] вагонсем юсакан цехри коммунистсем Букаткинпа Писменный юлташсем, ремонтно-механически цехри слесарь-комсомолец Орлов, инструментальнăй цехри строгальщик-комсомолец Емельянов тата ытти нумай юлташсем куллен икшер-виçшер норма тултараççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

[illegible]

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 19-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 19-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Мартăн 18-мĕшĕнче противникăн 16 самолечĕ пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 7 самолет çухалнă.

Мартăн 19-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 5 самолечĕ персе антарнă.

* * *

Мартăн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсен чаçĕсем [illegible] 85 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 110 лава, горючи тултарнă 4 автоцистернăна, 19 оруди, зенитнăй пулеметсен 14 точкине, 21 минометне пĕтерсе тăкнă [illegible].

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче [illegible] тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 2.500 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Артиллерирен персе тата разведка тăвакан группăсем çапăçнипе тăшманăн 9 блиндажĕпе землянкине тата наблюдательнăй пунктне çĕмĕрнĕ, 2 танк, полевой артиллерин батарейине, танксене хирĕç пемелли 2 оруди, темиçе станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 6 оруди, 28 пулемет, 5 миномет, танксене хирĕç пемелли темиçе пăшал, 8 винтовка, 13 радиостанци, 19.000 штука винтовка патронĕсем, 1000 мина, 500 ручной граната, 500 ракета тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем.

* * *

Пирĕн пĕр часть (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ), противника хирĕç вăйлăн çапăçса, халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ. Противникăнне пĕр танк, 3 оруди, 12 пулемет, 100 винтовка, 150 ещĕк патрон тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер виллисем выртса юлнă.

[illegible] Полещук [illegible] нимĕçсен С. ялĕнче [illegible] 10 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă [illegible] юлташсем командир пулса ертсе пынипе, нимĕçсен С. ялĕнче чарăннă батальонĕ çине пырса тапăннă. Отрядсенчи боецсем противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 70 çынна вĕлернĕ. Партизансен С. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсене халăх пурăнакан икĕ пунктран хăваласа кăларнă. Партизансем 45 ещĕк снаряд, продовольстви тиенĕ 5 лав, 100 мăшăр йĕлтĕр тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын вилсе тата аманса пĕтнĕ.

* * *

Аялагахра нимĕçсен 13-мĕш армейски корпусне кĕрекен дивизисенчен пĕри 1942 çулти январĕн 29-мĕшĕнче панă донесени текстне илсе пичетлетпĕр: «Июлĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа пирĕн войсковой часть тапти-сыпписĕр тенĕ пекех çапăçусенче. Юлашки уйăхсенче вăл кунĕн-çĕрĕн оборонăра йывăр çапăçусем туса пырать. Санитари учрежденийĕсем чирлисемпе тата стройран тухнисемпе тулса ларнă. Пирĕн чаçсенчи салтаксен ĕнтĕ тăватă—ултă эрне хушши тĕпе-йĕм улăштарма май пулман, салтаксем хуралса [illegible] аптăракан [illegible] çивчĕ ыйту [illegible] сывлăх тĕ[illegible] начар. Мĕнпур [illegible] ирттернĕ нумай [illegible] илсе янипе, [illegible]-хырăм тата [illegible]çĕ. Салтаксем нумайĕшне кĕ[illegible] инкек-син[illegible] аплисĕр çапă[illegible] хăш-кăмăлĕпе çитнĕ. Сал[illegible] нумай [illegible]сенче тытса [illegible]. Февраль уйăхĕнче [illegible]нă. Февраль[illegible] Хĕрлĕ Çар про[illegible] çапса, нимĕçсен войскисен шухăш-кăмăлĕпе вăйхăватне татах та ытларах хавшатнă.

* * *

Çартан тарса кайнă финн салтакĕсен хĕçпăшаллă ушкăнĕ Парикала хулинчи продовольстви склачĕсем çине тапăннă. Складсене сыхлакан шюцкоровецсемпе тытăçса çапăçнă вăхăтра салтаксем патне вырăнти çынсен, пуринчен ытларах хĕрарăмсен, ушкăнĕ хутшăннă. Шюцкоровецсене хăваласа ярса тата продуктсене вырă халăха валеçсе парса, салтаксем вăрмана тарса пытарнă.

* * *

Уралри предприятисенчи стахановецсем çак кунсенче питех те паллă производствăллă темиçе рекорд тунă. Н-ски заводра ĕçлекен токарь Киселев юлташ задание 1454 процент тултарнă. Бурщик Илларион Янкин пысăк ĕç тухăçлăхĕн çĕнĕ тĕслĕхне кăтартнă. Унăн ĕç меслечĕсемпе нумай горняксем усă кураççĕ. Вăл хăйĕн ĕç нормине 13 хут ирттерсе тултарнă.

Мартăн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 20-мĕш ĕçран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Чернышев юлташ командир пулса ертсе пыракан Гвардейски часть (Хĕвеланăç фрончĕ) юлашки кунсем хушшинчи çапăçусенче нимĕçсене 3 оруди, 49 миномет, танксене хирĕç пемелли 2 пăшал, 14 пулемет, 20 автомат, 349 винтовка, 27 грузовой тата 6 çăмăл автомашина, 22 мотоцикл, 3 вездеход, 70.000 патрон тата интендантски пурлăхăн икĕ складне тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем темиçе çĕршер çын вилсе пĕтнĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем халăх пурăнакан икĕ пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 200 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă, тăшманăн икĕ танкне персе çĕмĕрнĕ тата юсавлă икĕ танк, 5 оруди, автоматсемпе пулеметсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделени нимĕçсем йышăнса тăракан хутор патне çĕмĕрсе кĕнĕ. Пуçланса кайнă çапăçура пирĕн боецсем тăшманăн 124 салтакне çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Летчик-истребительсем Пронюшкинпа Серепин юлташсем противник йышăнса илнĕ территори тĕлĕнче вĕçсе çӳресе разведка тунă. Кĕтмен çĕртен сывлăшра нимĕçсен «Мессершмитт—109» йышши 6 самолечĕ курăнса кайнă. Совет летчикĕсем тăшманăн самолечĕсене çийĕнчех атакăланă. Тепĕр темиçе минутăран нимĕçсен вут хыпса илнĕ икĕ самолечĕ çĕре персе аннă. Унтан пирĕн летчиксем тăшманăн татах тепĕр самолетне персе антарнă. Противникăн ытти самолечĕсем хăвăртрах тарса çухалнă.

* * *

Ленинград облаçĕн гитлеровецсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен В. тата О. юлташсен отрячĕсенчи партизансем нимĕçсен аялтан вĕçсе пыракан бомбардировщикне асăрханă. Боецсем бомбардировщиксем çине ушкăнпа пеме тытăннă. Партизансем темиçе залп панă хыççăнах самолет сиенленсе ирĕксĕрех çĕре анса ларнă. Партизансем, самолет экипажĕ çине пеме тытăнса, нимĕçсен хирĕç тăма пăхнă 5 летчикне пĕтерсе тăкнă, 6-мĕш летчикĕ вăрмана тарса пытанма ĕлкĕрнĕ. Çакăн çинчен партизансем таврари мĕнпур ял çыннисене пĕлтернĕ. Нимĕçсен шăнса хытăркана летчикĕ пĕр яла пырса кĕрсенех, ăна колхозниксем ярса тытса партизансен отрячĕн штабне илсе пынă.

* * *

Нимĕçсен 331-мĕш пехотнăй дивизийĕн 558-мĕш полкĕнчи 2-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Карл Рихтер çапла каласа панă: «331-мĕш дивизие Кенигсбрюкк хулинче пухса йĕркеленĕ. Пирĕн батальона нумаях та пулмасть фронта ячĕç. Хамăра янă вырăна çитсен, эпир 50 салтака яхăн тăм илсе янине асăрхарăмăр. Çĕрле пулнă малтанхи çапăçурах пирĕн рота тарса саланса пĕтрĕ. Эпĕ çакна çынсене çар ĕçне начар вĕрентсе хатĕрленипе ăнлантарса паралăп. Рота командирĕ пире персе пăрахассипе пĕрмаях хăратса тăнă пулин те, дисциплина пирĕн япăх пулнă».

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Иосиф Альброс февралĕн 22-мĕшĕнче тăван çĕршывне çапла çырнă: «Пирĕн полк артиллери пулăшса пынипе неприятелĕн позицине атакăлама темиçе хутчен те хăтланса пăхрĕ, анчах та вырăссем, танксемпе усă курса, пирĕн тупăсене пурне те стройран кăларчĕç. Пирĕн батальонсенчен пĕри икĕ кун хушшинче 170 салтак çухатрĕ. Нимĕнле çитĕнӳ тăвайманăрах тата хамăрăн нумай юлташсене çухатса пĕтерсе, пирĕн ирĕксĕрех каялла чакма лекрĕ».

* * *

Сталино облаçĕнчи халĕ нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Кривые Луки ялĕнчи колхозниксем гитлерла вăрă-хурахсен тискер преступленийĕсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: нимĕçсем хăйсем ялта тăнă вăхăтра общественнăй çуртсемпе колхозниксен çурчĕсене 47 çурта çунтарса янă, колхозниксен мĕнпур выльăх-чĕрлĕхĕсене, апат-çимĕçĕсене, вырттармалли вырăнĕсемпе ăшă тумтирĕсене çуртарса кайнă. Гитлеровецсем 70 çулти Артем Тимофеевич Лаценко колхозника, 17 çулти Ульяна Кузьминична Захаренкова, 14 çулти Федор Цибульнике тата 16 çулти Татьяна Марченкона тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Ялтан чакса тухса кайнă чухне нимĕçсем старикĕсемпе пĕчĕк ачаллă хĕрарăмсене 10 çынна çунтарса янă. Акт айне çаксем алă пуснă: колхозниксем—Дмитрий Ткаченко, Н. Шемегонова, А. Приименко, А. Сопрунов, М. Сопрунов, Л. Корсун, И. Ивченко тата ыттисем те. Пĕтĕмпе 18 çын алă пуснă.

* * *

Югослави патриочĕсем юлашки вăхăтра итальянецсен отрячĕсем çине, партизансене хирĕç кĕрешме янă ескерсем çине, темиçе хутчен тапăннă. Март уйăхĕн малтанхи вунă кунĕ хушшинче Югослави партизанĕсем Вальево, Шабац тата Осечино хулисем патĕнче итальянецсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Партизансен аллине хĕçпăшалсемпе боеприпассем тиенĕ обозсем лекнĕ. Итальянецсен 13 салтакĕ хăйсен хĕçпăшалĕсемпе пĕрлех партизансем енне куçнă.

* * *

Урицкий ячĕпе тăракан судоремонтнăй заводри тимĕрçĕ Зельбухарев юлташ оборона заказне пурнăçланă çĕрте ĕçлесе, сменăра нормăна 4-600 процент тултарнă. Çав заводрах котельщик Богаев юлташ пĕр детале çĕнĕ майпа вальцевка тума çĕнӳ панă. Çакă вăл çавнашкал детале тунă çĕрте ĕç тухăçлăхне 8 хут ӳстерме май панă.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Ĕç хĕрӳллĕн пырать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Карай ялсоветĕнчи «Большевик» колхозра çуракине хатĕрленес ĕç хĕрӳллĕн пырать. Колхоз ялхуçалăх машинисене юсаса çитерет те ĕнтĕ, колхозниксем хĕрсех тырă сортлаççĕ. Çак кунсенче кашни колхозник, колхозница ĕçре. Куçĕсем курмаççĕ пулсан та, Антонов колхозник тырă сортланă çĕрте кунĕ-кунĕпе триер аврине алăран ямасть. Талăкра тонна çурă тырă сортлать.

Колхозăн хăшпĕр бригадисенче авăн çапса пĕтернĕ. Ку ĕçе пĕтĕмĕшпех вĕçлес тесе, тăваттăмĕш бригада авăнне çапма ытти бригадăсем пычĕç.

С. ИЛЛАРИОНОВ.

ИКЕ СМЕНĂПА ĔÇЛЕÇÇĔ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Янкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра вăрлăх сортлас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Кунта икĕ сменăпа ĕçлеççĕ. А. Степанова, Р. Иванова, А. Макарова колхозницăсем триерпа сменăра 15-шер центнер тырă сортлас вырăнне 20-шер центнер сортлаççĕ. Ватă колхозник М. Тимофеев—хуралçă, вăл çĕрле çĕрĕпе хурал тăрать, кăнтăрла тырă сортлама тухать, ĕçре ыттисенчен пĕре те кая юлмасть. Çавăн пекех М. Яковлева та кăнтăрла урăх ĕçре ĕçлет, каçхи сменăра тырă сортлать.

Юлашки кунсенче колхозниксем уйрăмах тăрăшса ĕçлеççĕ. Ĕçе кашни çын хутшăнать. Ватă колхозниксем пăрçа-ясмăк йышши тырăсене, пăрие алăпа пĕрчĕн суйлаççĕ. Колхоз вăрлăхлăх тырăсене çак кунсенчех сортласа çитерессишĕн тăрăшать.

Н. ВИНОГРАДОВ.

Колхозниксем фронта пулăшаççĕ

ÇЕМЕРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.) «Красный Октябрь» колхоз членĕсем, отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче стахановла ĕçленипе пĕрлех, тăван Хĕрлĕ Çара ытларах тырпул, аш-какай, çĕт-çу парса пулăшаççĕ. Вĕсем ку таранччен оборона фондне 152 килограмм тырă, 870 тенкĕ укçа, 7 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Кунсăр пуçне тата оборона фондне колхоз пĕр ĕне, 2 така, 54 килограмм çу панă.

Колхозниксем паттăр боецсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе те активлăн хутшăннă. Вĕсем хăйсем хушшинче 8 кĕрĕк пиншак, 105 тир, 28 килограмм çăм, 18 метр пир тата алшиш-нoскисем, çăлĕксем, çăматăсем те чылай пухнă.

Колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар воинĕсем патне ăшă сăмахсемпе çырнă çырусем, парнесем яраççĕ.

Ĕçшĕн хушса тӳлемелли законăн вăйĕ

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелли закон ялхуçалăхĕнче çитĕнӳсем тăвас ĕçре калама çук пысăк вăй пулса тăчĕ. Çавна пула пирĕн колхозсенчи фермăсем иртнĕ çулта выльăхсен шутне те, вĕсен продуктивноçне те нумай ӳстерчĕç. 1941 çулта, уя умĕнхи çулпа танлаштарсан, эпир кашни сăвакан ĕнерен 205 литр нумайрах сĕт суса илнĕ. Фермăсенчи чылай работниксем выльăх-чĕрлĕх продукцисене планран ирттерсе илчĕç. Пĕр Ишлей районĕнче кăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тухăçлă ĕçленĕшĕн 45 конюха, пăру пăхакансемпе ĕне сăвакансене 90 çынна, сысна пăхакансене 10 çынна, 32 чабана хушса тӳленĕ. Тухăçлă ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсене çĕршерĕн кăтартса пама пулать. Сăмахран, Вăрнар районĕнчи «Большевик» колхозра кашни сăвакан ĕнерен çулталăкне 900 литр сĕт суса илме палăртнă. Ĕнесене лайăх пăхнă пирки ку колхозра кашни ĕнерен 1403 литр сĕт суса илнĕ. Тăвай районĕнчи «Звезда» колхозра 1940 çулта кашни сăвакан ĕнерен пурĕ те 367-шер литр сĕт суса илнĕ, 1941 çулта вĕсем 1150 литр сĕт суса илме пултарчĕç. Колхозри чи хастарлă доярка Н. Федорова юлташ пурĕ 10 ĕне пăхнă. Вăл, кашни ĕнен сĕт тухăçлăхне 1.265 литра çитерсе, вунă ĕнерен пурĕ 12.650 литр сĕт суса илнĕ. Çакăншăн ăна 398 литр сĕт хушса тӳленĕ. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри М. Новикова доярка планпа 1.600 литр сĕт суса илес вырăнне 2.105 литр сĕт суса илнĕ. Уншăн ăна çĕнĕ закон тăрăх 1071 литр сĕт панă. Вăрнар районĕнчи «Большевик» колхозри Ф. Степанова, Елчĕк районĕнчи «Красный Восток» колхозри Краснова дояркăсем те хăйсене çирĕплетсе панă ĕнесен сĕт тухăçлăхне чылай ӳстернĕ.

Çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерес енĕпе те пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем тата колхозсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Партин 15-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхоз (Вăрнар р-) 51 пăруран 50 пăру, 70 путекрен 69 путек пăхса ӳстернĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Социализм» колхозри Афанасьев, «Первое Мая» колхозри Иванова юлташсем хăйсене çирĕплетсе панă ĕнесен пăрăвĕсене çулленех тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтереççĕ.

Çакнашкал кăтартуллă та паха тĕслĕхсене эпир сурăхсем, сыснасем ĕрчетес тĕлĕшпе те курма пултаратпăр. Куславкка районĕнчи «12 лет Октября» колхозри сурăхсене пăхакан Прокопьева 291 килограмм çăм илес вырăнне 334 килограмм çăм илнĕ, 50 путек пăхса ӳстерес вырăнне 104 путек пăхса ӳстернĕ. Çакăншăн ăна 5,3 килограмм çăм, 9 сурăх тирĕ хушса тӳленĕ. Канаш районĕнчи «Коммунар» колхозра Григорьев колхозник 91 сурăхран 122 путек пăхса çитĕнтернĕ. Çавăн пекех, Ишлей районĕнчи «Новое Акрамово» колхозра 7 сысна аминчен 102 çăвăр илсе, вĕсене пурне те пăхса çитĕнтернĕ. Уншăн ăна 6 çăвăр хушса тӳленĕ. Вăрнар районĕнчи Хурăнсур колхозĕнчи Яковлева, Çĕнĕ Яххакасси колхозĕнчи Филиппова свинаркăсем те сысна çурисене пăхса çитĕнтерес плана чылай ирттерсе тултарнă.

Лаша выльăхĕсене пăхса, вĕсен шутне йышлантарас тĕлĕшпе те пирĕн колхозниксем иртнĕ çулта начар мар ĕçлерĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Шордан» колхозри Иванов конюх 14 кĕсре хăмлаттарса тихисене пурне те лайăх пăхса çитĕнтернĕ. Шăхасан районĕнчи Волков конюха 7 тиха пăхса ӳстернĕшĕн 350 тенкĕ укçан хушса тӳленĕ.

Чăх-чĕп ĕрчетес, вĕсенчен çăмарта-сем илес енĕпе те ырă тĕслĕхсем сахал мар. Сăмахран, Каганович ячĕпе тăракан колхозри (Вăрнар районĕ) чăх-чĕп ферминче ĕçлекен В. Иванова юлташ 57 чăхран 3.990 çăмарта илес вырăнне 7.636 çăмарта илнĕ. Çăмарта илмелли плана ирттерсе тултарнăшăн Иванова юлташа çĕнĕ закон тăрăх 547 çăмарта хушса тӳленĕ. Калинински районри «Трактор» колхозри М. Иванова юлташ планпа пăхнинчен ытларах 16 хур пăхса çитĕнтернĕ. Етĕрне районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра Гордеев пчеловода хурт-хăмăр тухăçлăхне ӳстернĕшĕн пурĕ 158 килограмм пыл хушса тӳленĕ.

Ĕçшĕн хушса тӳлемелли законпа хавхаланса ĕçленине пула пирĕн колхозсем тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕç. Сăмахран, Калинин ячĕпе тăракан колхозри (Шăхасан районĕ) Васильев юлташ бригади кашни гектартан вăтам шутпа 18,3 центнер тĕштырă туса илнĕ. Çакăншăн Васильев юлташ бригади ĕçшĕн хушса тӳленĕ шутпа 48 центнер тĕштырă илнĕ.

А. МИТРОФАНОВА,
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн ялхуçалăх отдел заведующийĕн заместителĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

„Йыша кура мар, ăса хурса вăрçаççĕ“

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ. (ТАСС спецкорĕ). Мартăн 9-мĕшĕнче пирĕн 7 истребитель, Еремин капитан ертсе пынипе, тăшманăн 25 самолечĕпе хирĕç çапăçăва кĕни çинчен [illegible] истребительсен çĕнтерÿллĕн тухни çинчен пĕлтернĕччĕ. [illegible] Çак эскадрильи паттăр çыннисем Суворовăн «Йыша кура мар, ăса хурса çапăçăр» текен сăмахне хушса çырăç.

Вырăссен аслă полководецĕн каланă паллă сăмахне Еремин капитанăн эскадрильи хăйĕн паттăр ĕçĕсемпе пĕр хут çеç мар çирĕплетсе пачĕ. Еремин капитанăн коллективĕ вăл — опытлă та маттур летчиксенчен тăракан коллектив. Ку коллектив нимĕç-фашистла захватчиксене [illegible]

[illegible] мартăн 9-мĕшĕнче [illegible] эскадрилья командирĕ Еремин капитан калать:

«Тăшман самолечĕсемпе эпир сывлăшра малтан хут çеç мар тĕл пулса çапăçнă. Пăрахăннисĕр пирĕн бомбардировщиксене хÿтĕлесе пыракан пилĕк истребитель тăшманăн «МЕ-109» [illegible] «Ю-88» [illegible]

[illegible] пирĕн 5 «Юнкерсне» тата 4 «Мессершмиттне» тĕп пултарăмăр. [illegible]

[illegible] ухутара çÿрекен самолечĕсене [illegible] «Мессершмитт-109» [illegible] самолетне персе ÿкертрĕмĕр.

Сывлăшри питех те интереслĕ çапăçу мартăн 9-мĕшĕнче пулса иртрĕ. Ун çинчен ĕнер пĕтĕм совет хаçачĕсенче пĕлтернĕччĕ. Пирĕн 7 истребитель, бомбардировщиксене хÿтĕлесе задание пурнăçланă хушăра, нимĕçсен 7 бомбардировщикне тата 18 истребительне тĕл пулчĕ. Эпир противника çапăçăва кĕртме шутларăмăр. Тăшман бомбардировщикĕсем варрине лейтенант Седов вăркăнса кĕчĕ. [illegible]

Çак çапăçура пирĕн çичĕ истребитель нимĕçсен 10 самолетне персе антарчĕ, вĕсенчен 5-шĕ «МЕ-109» самолет. Лейтенант Скотной 2 самолет, Саломатин, Мартынов, Седов [illegible] Пĕр самолетне сержант Король персе ÿкерчĕ; эпĕ персе антарнă самолет та кунтах хутшăнчĕ.

Тăшманăн самолечĕсене хирĕç [illegible]

Тăшман хăй вăйне пирĕнтен [illegible] Çапах та эпир ăна çĕнтеретпĕр. [illegible] Сталин юлташ [illegible]

Пирĕн боец-командирсем маттур летчиксем: Еремина, Залитаева, Седова, Саломатина, Скотнова, Мартынова тата Короля — паллă çĕнтерÿ тунă ятпа [illegible] саламласа [illegible]

Д. РОЗОВ.

Тăшман хупăрласа илнĕ танкра тăхăр талăк хушши пурăннă

СУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ. (ТАСС спецкорĕ). Б. ялне атакăланă чухне пирĕн пĕр танк тăшман вырăнне [illegible] Танка тăшманăн снарячĕ лекни [illegible] Машина экипажĕ [illegible] Машина командирĕ [illegible] Коваленок юлташ [illegible]

[illegible] рать. Анчах та патронсемпе снарядсем ĕнтĕ ак вĕçне çитеççĕ, Коваленок юлташ вăйлăн пеми пулчĕ, юлашкинчен ак пачах пеме чарăнчĕ.

Çĕмĕрĕлнĕ танкăн пĕртен-пĕр танкистне те парăнтарайман гитлеровецсем хăюлланаççĕ. Вĕсем совет танкне хупăрласа илеççĕ те танкистне парăнма сĕнеççĕ. Ответ парас вырăнне, Коваленок вăрă-хурахсем çине пулеметăн юлашки черетне кăларса ярать, сахалтан та пĕр вунă фашистне çавăпа çулнă пек çулса ывăтать.

Нимĕçсем совет боецне хăратса [illegible]

Тăхăр кун тăхăр каç механик-водитель тăшмана хупăрласа илнĕ танкра ларать. Ĕнтĕ унăн юлашки вăйĕ те пĕтсе çитет. Сасартăк вăл вырăнти çапăçусем [illegible] махланисене илтет. Кусем Б. ялĕнчен фашистсене хăваласа кăларнă пирĕн пехотинецсем пулаççĕ. Шăнса хытнă, выçăпа пÿхнĕ, халтан кайнă танкист танк алăкне уçать. Анчах хăй машинăран юлташĕсем пулăшмасăр тухаймасть, боецсем герой-танкиста машинăран кăлараççĕ те ала çинчех медицина пунктне леçеççĕ. Халĕ Коваленок юлташ сывалать, çĕнĕрен çапăçăва кĕрес куна кÿç пекех кĕтсе тăрать.

И. ДЕНИСОВ.

Фашистсен гарнизонĕ çине тапăнни

КАРЕЛИ ФРОНЧĔ, мартăн 18-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Соловьев юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри разведчиксем тăшмана кăнтăрла та çĕрле те канăç памаççĕ. [illegible]

[illegible] кăларнă. Финн салтакĕсемпе офицерĕсем 30 çынна яхăн вилнĕ, ыттисем вăрмана тарса ÿкнĕ. Разведчиксем продовольстви складне çунтарса янă, минăсем тултарнă 6 ещĕк тата гранатăсемпе патронсем [illegible]

П. БАРАННИКОВ.

Гитлерла провокаторсен ушкăнĕнчи „çуркуннехи хавхалану“

Юлашки кунсем хушшинче нимĕçсен фашистла пропаганда органĕсем хăйсен черетлĕ суя кампанийĕ валли тĕп тема вырăнне Иранра пулса иртекен темĕнле фантазиллĕ «событисем» çинчен калакан ухмахла шухăшласа кăларнă тĕрлĕ халлапсене суйласа илнĕ. Çапла, сăмахран, Гитлерăн Трансоцеан агентстви мартăн 17-мĕшĕнче панă хайĕн пĕлтерĕвĕнче—Анкараран илнĕ текенскерĕнче, тĕрĕссипе Берлинра туса хатĕрленĕскерĕнче—«совет войскисем Иранăн çĕнĕ облаçĕсене, уйрăмăнах Хĕвеланăç Ирана, хăйсем контроль туса тăма тытăннă» тесе сÿпĕлтетет. Германин информаци бюровĕ çав кунах, Анкараран илнĕ телеграмма пек туса кăтартса, тĕмсайла элек сарнă. Германин информаци бюровĕ ухмахла сÿпĕлтетнĕ тăрăх, «советăн Тавризри» темĕнле юмахри пек «комиссарначĕ» «Иранри Азербайджана СССР составне кĕртме» хатĕрленет пулать, ССР Союзĕ вара «Тегерана оккупацилеме хатĕрленет» пулать тата ыт. те..

Çакă васкавлăн пуçарса янă кампанире, гитлерла пропагандăн ытти хÿрешкисем те—Стефани, Гавас-ОФИ агентствисем, Европăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчи гитлерла тарçăсен радиостанцийĕсем хутшăннă кампанире, пĕр-пĕринпе хирĕçÿллĕ, пăтрашуллă сасăсем сахал мар илтĕнеççĕ. Çапла, сăмахран, хăшпĕр пĕлтерÿсенче «Англипе Совет Союзĕ хушшинчи темĕнле хирĕçÿсем» пирки калаççĕ, тепĕр тĕрлĕ пĕлтерÿсенче, пачах урăхла, ССР Союзĕпе Англия пĕр-пĕринпе «Иранăн хăш пайĕ кама пăхăнса тăрасси çинчен» темĕнле килĕшÿ туни пирки сÿпĕлтетеççĕ, виççĕмĕш тĕрлĕ пĕлтерÿсенче—Иран правительствипе унăн союзникĕсем—ССР Союзĕпе Великобритани хушшинчи темĕнле «хирĕçÿсем» çинчен шухăшласа кăларнă элексене ытларах вырăн панă.

Çакă ухмахла, анчах усал шухăшлă элекĕн уйрăм авторĕсемшĕн пĕр Иран çĕршывĕ кăна тăвăр, вĕсем вара хăйсен суйисем çумне Ирака та çыпăçтараççĕ. Çапла, сăмахран, Токиори «Ници-Ници» хаçат мартăн 15-мĕшĕнче хăйĕн Стамбулри корреспонденчĕ пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Çав корреспондент темĕнле «Багдадран илнĕ» çакнашкал «сведенисем» çине кăтартса парать: «Совет Союзĕн кăнтăрти Курдистанра тăракан войскисем» (Токиори хаçат çакăн çинчен пĕлесех тет пулсан, совет войскисем унта нихăçан та пулман) мартăн 11-мĕшĕнче «кĕтмен çĕртен Иранпа Ирак хушшинчи чикĕ урлă каçса, Ирак территорийĕ çине пырса кĕнĕ» пулать. Трансоцеан агентстви нимĕн çинчен шухăшласа тăмасăр пĕлтернĕ тăрăх, «Иран тавралĕнче» «кочевниксен темĕнле восстанийĕсем пулса иртеççĕ» пулать тата совет войскисем тартан «анаталла, Мосулри нефть районĕсем патнелле каякан çулсем тăрăх» куçма тытăннă пулать.

Çакă ухмахла пĕлтерÿсем, малтан пуçласа вĕçне çитиччченех, вĕсем Иран е Ирак территорийĕн кирек мĕнле пайĕ пирки каласçĕ пулсан та, пурте пĕр пекех пуçран шухăшласа кăларнă суя пĕлтерÿсем пулса тăраççĕ.

Иранри «Эттелаат» хаçат çак кунсенче çав суя кампание тивĕçлипех питлесе тăрă шыв çине кăларчĕ, ССР Союзĕ те, Великобритани те Иран умне территори тĕлĕшпе нимĕнле требованисем те кăларса тăратман тесе тĕрĕссине пĕлтерчĕ, «Иранпа унăн союзникĕсем хушшинче нимĕнле хирĕçÿсем те çук» тесе кăтартса пачĕ. Гитлерла суеçĕсен ушкăнĕнчи çакă «çуркуннехи хавхалану» гитлерла Германин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи чылай çĕршывсен лăпкăлăхĕпе хăрушсăрлăхне хирĕç пыракан провокациллĕ ĕçĕсемпе, темĕнле вăрттăн хатĕрленĕвĕсемпе пĕр вăхăтрах пулса пыман пулсан, Берлинпа унăн хÿрешкисем шухăшласа кăларнă суяпа элек çинчен асăнма та кирлĕ пулман пулĕччĕ-и тен. Гитлерăн ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче мартăн 16-мĕшĕнче пулса иртнĕ пресс-конференцире журналистсене çапла пĕлтернĕ: «Иранри Азербайджана Совет Союзĕн составне кĕртесси Турцишĕн питех те асăрханмалли ĕç пулса тăрать» тенĕ, — çак пĕлтерĕве шута илсен, çÿлте кăтартнă суя кампани лартакан хăшпĕр тĕллевсене çăмăллăнах ăнланса илме пулать. Фон Папена «вĕлерме тăнă пек» кăтартса ултавлă инсценировка туса ирттернĕ хыççăн, гитлеровецсем Турцин тулашри политикине хĕсмелли çĕнĕ майсем шухăшласа кăлараççĕ тата çакнашкал «нервсен вăрçипе» Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче агрессиллĕ çĕнĕ авантюрăсем тума хăйсене валли çул уçма тăрăшаççĕ. (ТАСС).

Турци республикин президенчĕ Исмет Иненю каланă сăмах

АНКАРА, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). Анатолийски агентство пĕлтернĕ тăрăх, Турци республикин президенчĕ Исмет Иненю Измирте пурăнакан халăх умĕнче сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче Исмет Иненю çапла каланă: «Тĕнчере халĕ сиен курман çĕршывсем çук. Вăрçă пĕтĕм тĕнче çине хăй аллине хунă. Аллине хĕçпăшал тытса вăрçа кĕнĕ çĕршывсен йышĕ пысăк. Хăшпĕр çĕршывсем, çав шутрах Турци те, вăрçăн тулашне тăрса юлчĕç, анчах вăрçа пула вĕсен те сахал мар тÿсме тивет. Лару-тăрусем çине пăхнă чухне çакна ĕнтĕ асăрхас пулать. Пирĕн тулашри политика мĕнле иккеннине эпир уççăнах каласа пĕлтернĕ. Пĕр-пĕринпе вăрçакан çĕршывсемпе эпир кашнинпех килĕшÿсем тунă. Эпир хамăр тума пулнисене тăрăшса тата камшăнне-мĕнне пăхмасăр туса пыратпăр. Пĕр-пĕринпе вăрçакан çĕршывсемпе туслă тата нейтральнăй политика тытса пыма йывăррине эсир ĕнтĕ хăвăрах пĕлетĕр.

Республикăллă правительство, меджлис йышăннине пăхăнса, çав политикăна чи лайăх кăмăлпа тата чи ырă шухăшпа тытса пырать. Пирĕн халĕ пĕр-пĕринпе вăрçакан çав çĕршывсемпе калаçса таталман ыйтусем, пĕр-пĕринпе хирĕçтерме пултаракан ыйтусем пĕрре те çук ĕнтĕ. Пирĕн çывăхра пĕр синкерлĕ пĕлĕт те курăнмасть. Анчах та, çапла пулсан та, эпир ĕлĕкхи пекех асăрханса, сыхланса тăмалла, мĕншĕн тесен вăрçă çавнашкал анлăн сарăлса пынă вăхăтра темĕн те сиксе тухма пултарать».

Исмет Иненю малалла çапла каланă: Турци умĕнче чи малтанах çакăн пек задача тăрать: вăл кирек хăçан та хăйне хÿтĕлеме хатĕр пулмалла. Вăрçă пуçланнăранпах эпир хамăра хамăр пĕтĕмпех тенĕ пек мобилизацилерĕмĕр. Граждансем хăйсем тума тивĕçлĕ ĕçсене туса пыраççĕ — чикĕ хĕррине сыхлаççĕ. Вăхăт çитсен вĕсем хăйсен килĕсенчи ĕçĕсем патне таврăнĕç. Тĕнчери лару-тăру улшăнмасан, çĕршыв нихăçан та хăйĕн войскисене сыхă та хатĕр тăма пăрахтарас çук, — тенĕ.

«Хальхи лару-тăрура, — тенĕ малалла Исмет Иненю, — çĕршывăн хăйĕн паянхи положенине тытса пыма çăмăлах мар. Турцин малашне мĕнле пулмалли витĕр курăнса тăрать. Турци вăрçă тулашĕнче юлма тăрăшĕ. Вăл хăй мĕн тума пултарнине пурне те тăвĕ, апла та вăрçăран хăтăлма май çук пулсан, вара эпир çĕршыв умĕнче хамăр тума тивĕçлĕ ĕçе тăвăпăр».

Турцин шалти пурнăçĕнчи ыйтусем çинчен каланă май, Исмет Иненю продовольстви снабженийĕ ыйтăвĕ çинче чарăнса тăнă. «Промышленность таварĕсем тĕлĕшĕнчен Турцин пысăк йывăрлăхсем тÿсse курма лекĕ», — тенĕ вăл. Исмет Иненю укçа-тенкĕсене тирпейлĕ тыткалама, халăх потребноçне пĕлсе йĕркелеме хушнă, уйрăмăнах çĕнĕ акана ăнăçлăн ирттерме кирлине палăртнă.

Хăй сăмахĕнче Исмет Иненю ачасене воспитани парас ыйту çинче те чарăнса тăнă, ачасене хамăрăн тăван çĕршыва чунтан юратма хăнăхтарас пулать, тенĕ вăл.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Мартăн 15-17-мĕшĕнчи телеграммăсене пăхса тухни).

Çĕнĕ Гвинея юлашки кунсенче Лăпкă океанăн Кăнтăр-Хĕвеланăç пайĕнчи фронтра чи активлă участок пулса тăрать. Ытти районсенче лăпкă пулсан, кунта, Çĕнĕ Гвинейăн хĕвелтухăç пайĕнче, вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Утравăн Çурçĕр-Хĕвелтухăçĕнчи çыранне тухса, Японин войскисем Çĕнĕ Гвинейăна тата унпа çывăхри утравсене — Çĕнĕ Британие, Соломон утравĕсене тата ыттисене те пĕтĕмпех çавăрса хăйсен аллине тытса илесшĕн.

Çĕнĕ Гвинея утрав Австралирен çурçĕр енче вырнаçнă. Вăл унтан Арафурски тинĕспе тата Торрес проливĕпе уйăрăлса тăрать. Торрес проливĕн сарлакăшĕ 200 километра яхăн. Японин войскисем Çĕнĕ Гвинейăн çурçĕр çыранĕсем патне пухăнни Австрали çине тапăнса кĕме хатĕрленнине пĕлтерет. Пĕлнĕ тăрăх, утрав çинче халĕ Японин салтакĕсем 40 пине яхăн çитеççĕ. Юлашки кунсенче Çĕнĕ Гвинея районĕнче икĕ енĕ те пурпинчен ытти авиаци [illegible] Хăйсен войскисене [illegible] Япони самолечĕсем утравăн кăнтăр пайĕнчи çар объекчĕсемпе хулисене кулленех атакăлаççĕ. Çак вырăнтанах Японин авиацийĕ Австралин çурçĕр енчи çыранĕсем çинчи тĕрлĕ пунктсем çине те вĕçе-вĕçе пырса тапăнать. Çапла ĕнтĕ, фронт Австрали материкĕ патнех çывхарчĕ. Тĕрĕссипе, кĕрешÿ ĕнтĕ Австрали патне пымалли вырăнсенче пырать. Вăрçă операцийĕсем мĕнле пынине пăхсан, японецсем умĕнче пысăк йывăрлăхсем тăни курăнать.

Голланди Индийĕн тĕрлĕ районĕсенче — Суматрăра, Явăра, Борнеора, Целебесра тата ыттисенче те çаплах-ха кĕрешÿ пырать, вăл çапăçусем нумайĕшĕсем партизанла кĕрешĕве аса илтереççĕ.

Бирмăра юлашки вăхăтра лăпкă. Мартăн 17-мĕшĕнче японецсем сасартăк Америкăпа Филиппин войскисен позицийĕсене атакăланă, анчах та çав атакăна сирсе пăрахнă. Бирмăра пысăках мар тытăçусем кăна пулса иртеççĕ. Юлашки вăхăтра тинĕс çинче [illegible] (ТАСС).

Иран хаçачĕ тĕнĕл держависен провокациллĕ пропагандине тăрă шыв çине кăларать

ТЕГЕРАН, мартăн 18-мĕш. (ТАСС). Гитлеровецсем, хăйсен Иранран Совет Союзĕпе Англи çĕршывĕсем çине тапăнмалли плацдарм туса хурас планĕ арканса кайнă хыççăн, çиллисене шăнараймасăр, радио тăрăх, хăйсем патĕнчен те, Римпа Виширен те кулленкун Иран çинчен тĕрлĕ элексем сараççĕ. Тегеранри хаçатсем фашистсен пропагандине кирлĕ пекех тавăраççĕ. «Мехри Иран» хаçат çапла çырать: тăшманла государствăсем хăйсен усал кăмăлĕсене кура, Иран халăхне пăлхатас тесе, тĕрлĕ элексем сараççĕ, шах Исфахан тухса кайнă, Форуги тарнă, Совет Союзĕн Иранри Азербайджана туртса илес шухăшĕ пур, тесе куç кĕретех суяççĕ.

Фашистсен суйине тăрă шыв çине кăларса, хаçат çапла çырать: Совет Союзĕпе Англия Иранпа килĕшÿ туса Иранăн территориллĕ тĕрĕс-тĕкĕллĕхне, политика тĕлĕшпе никама пăхăнманлăхне йышăнчĕç. Çапла вара тăшманла государствăсем радио тăрăх пĕлтернисем вĕсем Иранри обществăн шухăш-кăмăлне пăтратса ярас шутпа пакăлтатнисем кăна пулса тăраççĕ.

— Ленин,—тет хаçат,—тĕнчери чи аслă çынсенчен пĕри, Иранпа килĕшÿ турĕ, çав килĕшÿ икĕ çĕршыв хушшинчи туслă çыхăнăвăн çутă страници пулса тăрать. Совет Союзĕн çулпуçĕ Сталин килĕшсе тунă договорсене пăсмасть, вăл Совет Союзĕпе Иран хушшинчи туслă çыхăнăва хапăллать.

ТЕГЕРАН, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). «Эттелаат» хаçат тĕнĕл держависен радиостанцийĕсен провокациллĕ пропагандине хирĕç «Ирсĕр пропаганда» ятлă умстатья пичетлесе кăларнă. Умстатья авторĕ тарăхса çакна палăртать: çав радиостанцисем, Иран ССР Союзĕпе тата Великобританипе союзлă договор тунă хыççăн, Иран çине тÿртĕн пăхма тытăнчĕç, тĕрлĕ майпа айăплама, тĕрлĕ суя-элексем сарма, правительствăн юлашки кризисĕпе те, Иранăн хăйĕн шалти ĕçĕ çеç пулса тăраканскерпе, хăйсене кирлĕ пек тивĕççĕр усă курма тытăнчĕç, тесе çырать. Хаçат çав ниме юрăхсăр та провокациллĕ пĕлтерÿсен тĕслĕхĕсене иле-иле кăтартать. Çав пĕлтерÿсем хушшинче темиçе тĕрлĕ ухмахла халлапсем те пур: унта Иранра «йĕркесĕрлĕхсем пуçланнă» тесе те, Совет Союзĕ Иранри Азербайджанпа тем тăвасшăн тесе те, шах Исфахан тухса кайнă тесе те—тем те пĕр суйса сÿпĕлтетнĕ.

«Çавнашкал ĕмĕр пулман япаласем çинчен сÿпĕлтетни кашни иранеца чунтан тарăхтарать, — тесе çырать хаçат. — Çавнашкал пакăлтатса Иран халăхне хăратма, пăлхатма, пăшăрхантарма пăхаççĕ. Анчах та иранецсем çавнашкал тенденциллĕ суя-элексемпех улталанас çук. Совет Союзĕпе Англи Иранăн никама пăхăнманлăхне тата унăн территорийĕн тĕрĕс-тĕкĕллĕхне хисепленине уççăнах палăртрĕç. Союзлă çĕршывсемпе Иран хушшинчи çыхăну куллен-кун лайăхланса пырать, пирĕн хушăмăрти туслăх çирĕпленсех пырать. Пирĕнпе туслă Совет правительстви Иранри Азербайджана илес-тăвас тесе е ытти районсене, вăрçа пула совет войскисем вырнаçнă районсене, илес-тăвас тесе çăвар та уçни пулман. Ун пек каласма пĕр сăлтав та çук. Халиччен эпир совет работникĕсем енчен тата Совет правительстви енчен ыррине кăна куртăмăр, договор тăрăх йышăннисене, договор принципĕсене хисепленине кăна, Иран прависене пăхăнса пынине кăна куртăмăр.

Çапла ĕнтĕ, Иранри Азербайджан Совет Союзĕ çине куçать тенĕ суя халлапа иранецсен пуçне çавăрас тесе кăна шутласа кăларнă. Анчах та çав суя халлапа ярса лараканскем ку расра та йăнăшрĕç, мĕншĕн тесен иранецсем хăйсемпе кÿршĕллĕ союзлă государствăн туслă политикине уççăнах курса тăраççĕ».

Риомри процесс

ЖЕНЕВА, мартăн 18-мĕш. (ТАСС). Риомри судăн 14-мĕш ларăвĕнче свидетельсенчен ыйтма тытăннă. Армисене ертсе пынă генералсене ыйтса тĕпченĕ. Свидетель кăтартăвĕсене чи малтан Бессон генерал панă. Вăл малтанах Арденри, унтан Альпăри армисене, юлашкинчен, Эльзаспа Юрăна хÿтĕлекен армин 3-мĕш групине ертсе пынă.

Бессон генерал, высшăи çар совечĕн ларăвĕсем питĕ сайра пулса иртетчĕç, тесе тата 1937—1939 çулсенче çар совечĕн ларăвĕнче вăл пĕтĕмпе те пĕр хутчен кăна пулнă, тесе кăтартса панă. Мобилизаци пăвиччен Германипе Францин çарĕсем мĕнле пулнă? тесе Даладье панă ыйту çине свидетель: тĕрĕс ответ пама пултараймастăп, тенĕ. Вара Даладье, генерал Риккандар панă даннăйсемпе усă курса, Франци çарĕнче офицерсем Германи çарĕнчинчен 4 пин чухлĕ ытларах пулнă, тесе пĕлтернĕ. Бессон ертсе пынă армин 3-мĕш групи (унăн салтакĕсем лайăхах çапăçнă) тытăнса тăма пултарнă-и?—тесе ыйтнă Даладье защитникĕ Рибо адвокат. Тытăнса тăма пултарнă, тесе ответленĕ Бессон, тата армие авиаци енчен пулăшу парса тăрасси кăна кирлĕ пулнă, тесе палăртнă.

Унтан иккĕмĕш свидетель—Фландрире тата Дюнкеркра çапăçнă армин пĕрремĕш групине ертсе пынă Бланшар генерал кăтартусем панă. Çарăн шухăш-кăмăлĕсем ятламалла мар, кадрти офицерсем питĕ лайăх, Франци танкĕсем çавтери аван пулнă, тесе пĕлтернĕ Бланшар.

Суд председателĕпе прокурор Бланшарпа Бессонран ыйтса тĕпченĕ чухне Франци вăрçа хатĕр пулманнишĕн айăпланакансем айăпли çинчен калакан кăтартусем илме тăрăшнă.

Виççĕмĕшĕ маркиз де Мустьер свидетель тухнă. Вăл Даладье çарти шухăш-кăмăл калама çук аван пулнă тесе кăтартнисене çирĕплетсе панă. «Эпĕ, тÿрĕ çын, — тенĕ свидетель,—эпĕ ялanах Даладьепе хирĕç сасăланă, Юра районĕнче укрепленисем тума кирли çинчен эпĕ ăна каласан, вăл мана çавна тума сăмах пачĕ те хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртрĕ».

Тĕнĕл держависен Балканри ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕш. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçатăн Анкарари корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: пур паллăсем те Балканра тата Эгей утравĕсем çинче тĕнĕл держависем вăйлăн хатĕрленнине кăтартса тăраççĕ. Паллах, вĕсем Çывăхри Хĕвелтухăçне тапăнма хатĕрленеççĕ. Греци, Крит тата Додеканез утравĕсем тавра тĕнĕл держависен тинĕс-çар вăйĕсемпе сывлăш çар вăйĕсем пысăк активлăх палăртни курăнать.

Австралие Америка войскисем пырса çитнĕ

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Австралие халĕ çĕнĕрен Америка войскисен нумай контингенчĕсем пырса çитнĕ. Вĕсен шутне авиаци те кĕрет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШКОЛА ФЗУ ЧЕБОКСАРСКОЙ ХЛОПЧАТО-БУМАЖНОЙ ФАБРИКИ

15 марта по 15 апреля 1942 года производит ПРИЕМ УЧАЩИХСЯ.

В школу ФЗУ принимаются подростки в возрасте не моложе 16 лет, имеющие общеобразовательную подготовку не ниже 4 классов средней школы.

Срок подготовки по сокращенным программам—3 1/2 месяца.

Школа ФЗУ готовит:

1. Ватерщиц,
2. Банкаброшниц,
3. Лепточниц,
4. Ткачей,
5. Сновальщиц,
6. Мотальщиц,
7. Проборщиц.

Учащиеся школы ФЗУ обеспечиваются:
1. Стипендией на общих основаниях в размере от 94 руб. до 140 руб. в месяц,
2. Хлебными карточками,
3. Питанием через столовую и ларек фабрики.

Для поступления в школу ФЗУ необходимо подать заявление с приложением:
1. Справки о рождении или паспорта (паспорт предъявляется лично),
2. Справки об образовании,
3. Краткой автобиографии,
4. 4 фотокарточек.

За всеми справками по вопросам приема обращаться в канцелярию школы ФЗУ (ул. Карла Маркса, 20) ежедневно, кроме общевыходных дней, с 9 до 13 часов. 2—1

КИНОТЕАТР
21 и 22 марта
ДВА КОНЦЕРТА
В антрактах и по окончании
ТАНЦЫ
Начало в 11 часов вечера.
Касса открыта с 2 часов дня.

Отдел подготовки кадров ЧЕБОКСАРСКОЙ ХЛОПЧАТО-БУМАЖНОЙ ФАБРИКИ с 15 марта по 15 апреля 1942 г. производит прием

НА КУРСЫ ПОДГОТОВКИ И ПЕРЕПОДГОТОВКИ рабочих следующих профессий:

1. Ватерщицы,
2. Лепточницы-трепальщицы,
3. Ткачи,
4. Мотальщицы,
5. Проборщицы,
6. Токари,
7. Слесари,
8. Электромонтеры,
9. Ремонтировщики,
10. Электросварщики,
11. Помощники мастеров.

Срок подготовки по сокращенным программам от 1 до 3 месяцев.

Курсанты обеспечиваются:
1. Зарплатой,
2. Хлебными карточками,
3. Питанием через фабричную столовую и фабричный ларек.

За всеми справками по вопросам приема на курсы обращаться в отдел кадров фабрики (ул. Карла Маркса, 20) ежедневно с 9 до 18 часов, кроме выходных дней. 2—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăçĕ пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 417 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 269. Ф. 6. 58 64 п. л.